Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

59 (7801) № * Шăмат кун, 2010 çулхи утă (июль) уйăхĕн 31-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕртме сухи тăваççĕ

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче**

Ял хуçалăхĕнче вăй хураканăн çĕр ĕçĕнче пĕр тапхăр тепринпе сисĕнмесĕрех улшăнса пырать. Пĕрле илсен вара çак çыхăну хуçалăхсен экономикине йĕркелет. Кам кун таппинчен юлмасăр ĕçлесе пырать – вăл ыранхи куна та шанчăклăрах пăхайрать.

«Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн хирĕсенче ирлесех ĕç шавĕ тăрать. Тĕрĕссипе вăл çĕрле те чарăнмасть темелле. Хуçалăхăн висĕ «хир карапĕ» районта пуринчен малтан кĕрхи çинче сухалама ĕлкĕрнĕччĕ те ĕнтĕ. Эпир хирсене çитнĕ чух пĕр уйра Димитрий Быков механизатор юлашки лаптăка сухалатчĕ. «Вăхăчĕ çавнашкал. Кашни ĕçех вăхăтра ĕлкĕрмелле. Паян епле ĕçлĕпĕр – ыран çапла пурăнăпăр», – терĕ самантлăха чарнă Т-150 тракторне выранĕнтан хускатса çамрăк механизатор.

Тепĕр уйра вара Алексей Артемьевпа Александр Пушкин хăйсене шанса панă МТЗ-82 тракторсемпе касă хыççăн касă суха тăватчĕç. Хуçалăх ертӳçипе



культурăсене вырса пĕтерсе кӳршĕллĕ «Оринино» хуçалăха пулăшу кӳчĕ. Паян вĕсем тăрăшсах çуртрисене пухса кĕртессипе ĕçлеççĕ. Кунта та ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ темелле.

Хуçалăх вырма тесе пиçсе çитнĕ тырă-пулăна хиртен пухса кĕртессипе çеç тимлемест. Ыранхи куна пăхса Мулкачкассисем паянах çĕртме сухи тăвасси тимлеççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне çĕртме сухине районĕпе 35 гектар тунă пулсан, «Восток» кооперативра ăна 25 гектар Михаил Шишокинпа кооперативăн тĕп агрономне Зоя Степановăна **(сăн ӳкерчĕкре)** шăпах суха кассисен пуçламăшĕнче тĕл пултăмăр та.

Хуçалăхра ĕçсем пĕри тепринпе тачă çыхăнура пулни тата ĕçсем пур вăйсене те пĕрлештерни пире те савăнăç парнелерĕ.

**А. БЕЛОВ, район хаçачĕн экономикăпа экологи пайĕн ертӳçи;**
**Т. АЛЕКСЕЕВА, ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспрерчĕ.**

## ЧР Патшалăх Канашĕ Михаил Игнатьева республика Президенчĕн полномочийĕсене панă

**Сесси**

***Июлĕн 28-мĕшĕнче республика Патшалăх Канашĕн черетсĕр вăтăрмĕш сессийĕ иртнĕ. Унта Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев Чăваш Ен Президенчĕн полномочийĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне–Чăваш Республикин ял хуçалăх министрне Михаил Игнатьева парасси пирки сĕнӳ тунине сӳтсе явнă.***



Сесси ĕçне Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Григорий Рапота, Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров, пирĕн республикăран Патшалăх Думин депутачĕсем Николай Бударин тата Павел Семенов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕнчен РФ Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕнчи представителĕ Владимир Слуцкер, муниципаллă пĕрлешӳсен пуçлăхĕсем тата ыттисем нумайăн хутшăннă.

Пĕтĕмпе 43 депутат хутшăннă унта. Сĕннĕ кандидатурăшăн регион парламенчĕн 37 депутачĕ сасăланă, 5-ĕн хирĕç пулнă, 1 депутат сасăлама тăхтаса тăнă. Аса илтеретпĕр: июлĕн 21-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев Чăваш Ен Президенчĕ пулма сĕннĕ кандидатурăна республика Патшалăх Канашĕнче пăхса тухма ыйтнă.

Михаил Игнатьева Чăваш Ен пуçлăхĕн полномочийĕсене панă май РФ Президенчĕн Федераци Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Григорий Рапота тухса каланă. Вăл палăртнă тăрăх Михаил Игнатьев умĕнче çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ задачăсем тăраççĕ. Республика ăнăçлă аталанса пынинче пурин тӳпи те пур. Çапах та татах нумай ĕçлес пулать. Николай Федоров ертсе пынă çулсенче республика ӳсĕмĕсем пĕчĕк пулман. Çĕнĕ Президент умĕнче тăракан задача – мĕн пур ыррине алла илесси, малашне вĕсене аталантарса пырасси.

Николай Федоров Президент пухăннисене чĕнсе çапла каланă: «Чăваш Ен – сывă пурнăçпа пурăнакан, малалла пăхакан республика. Эпир вара, хамăр çĕр çинче пурăнакансем, пĕчĕк Тăван çĕр-шыв патриочĕсем пулнă май, ăна аталантарма, унăн пуянлăхне ӳстерсе пыма тивĕç». Вăл çавна та хушса палăртнă. Чăваш Ен Президенчĕн полномочийĕ тухнă май вăл итогсене пĕтĕмлетсе малашне те республикăна малалла ăнăçлă аталантармалли çул-йĕре палăртĕ. Республика пуçлăхĕ палăртнă тăрăх вара Михаил Игнатьев тивĕçлĕ çын, унăн ертсе пырас ăсталăхĕ те пысăк.

Михаил Игнатьев çакăн пек пысăк чыс тунăшăн тав сăмахĕ каланă. «Республикăра сахал мар туса иртернĕ, анчах та умра – çĕнĕ тĕллевсем. Пурнăç вырăнта тăмасть, пирĕн ума вăл çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать. Республикăра пурăнакансен пурнăç условийĕсем лайăхрах пулччăр тесе эпĕ хамăн пĕтĕм ăсталăхпа пĕлĕвĕ парăп»,– тенĕ вăл.

**Çитĕнӳ**

## Вера Соколова – Европăра виççĕмĕш

***Çăмăл атлетикăпа Барселонăра иртекен Европа чемпионатĕнче хĕрарăмсем 20 километра хăвăрт утассипе ăмăртнă.***

***Малти виçĕ вырăна Раççей спортсменĕсем (сăн ӳкерчĕкре) çĕнсе илнĕ. Пирĕн ентеш Анаткас Апаш хĕрĕ Вера Соколова виççĕмĕш вырăна тухса пăхăр медале тивĕçнĕ.***

***Пăхăр медалĕн шăпи юлашки çухрăмсенче çеç уçăмланнă. Вера Испанипе Германи спортсменкисене хыçа хăварса финиша виççĕмĕш çитнĕ.***

***Хастар спортсменка спортри малтанхи утăмсене Аверкий Васильев тренер ертсе пынипе тунă. Юниорсен тупăшăвĕнче вăл Европа (2003), тĕнче (2006) Кубокĕсен çĕнтерӳçи пулнă. Кăçал Вера тĕнче Кубокĕнче тăваттăмĕш вырăна тухнăччĕ. Хальхи пăхăр – аслисем хушшинче ăмăртса илнĕ пĕрремĕш медаль.***

***Паян Вера ăсталăха Олимп вăййисене хатĕрлекен Саранскри центрта туптать.***

***Ентеше пысăк çитĕнӳпе саламлатпăр, ăнăçусем сунатпăр!***




**Вырма**

## Акă вĕсем – чăн-чăн паттăрсем

Районти комисси вырмана хутшăнакан комбайнерсен июлĕн 23 – 29-мĕшĕсенчи ĕçĕ-хĕлĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Тĕрлĕ маркăллă комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче çаксене вырма çĕнтерӳçисем тесе палăртнă: **«Акрос-530», «Дон-150»** – Суворов яч. хис. хуçалăхри Р.В. Кузнецов (1-мĕш вырăн), «Герой» хуçалăхри В.В. Ердуков (2), Суворов яч. хис. хуçалăхри И.А. Николаев (3), **«Вектор», «Полосье», «Енисей-954»** – Чкалов яч. хис. хуçалăхри Б.Н. Никитин (1), «Ударник» хуçалăхри В.А. Степанов (2), çав хуçалăхри Ю.А. Васиильев (3), **«Енисей-1200»** – «Восток» хуçалăхри С.В. Наумов (1), Ильич яч. хис. хуçалăхри Ю.П. Егоров (2), çав хуçалăхри В.И. Аврамов (3).

**Саламлатпăр**



Хаклă çыннăмăра, ырă кăмăллă тăванăмăра, юратнă аннене, кукамая, хунямана – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Анна Вениаминовна НИКОЛАЕВĂНА** 65 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăрăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе, юлташсемпе пуян пултăр.

**Саламлакансем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, юлташĕсем.**

# «Халăха, ĕçе юратмалла»

**Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарчĕ**



Кăçалхипе 65 хут паллă турăмăр Аслă Çĕнтерӳ уявне. Ачарах чух эпир, вăрçă хыççăнхи мирлĕ пурнăçра çуралса ӳснисем, çак уяв пĕлтерĕшне тен ăнланса та çитереймен пулĕ. Çулсем кайнăçемĕн вара, пурнăçăн тути-масине курнă хыççăн, аслă ăру çыннисем чăтса ирттернине чунпа курса туйма вĕренсен шутлатăн та çапла калатăн, «Турă ан хуштăр вĕсем курнине чăтса ирттерме»...

Муркашра пурăнакан З.Л. Синичкина вара ытти тантăшĕсемпе чăтнă, тӳснĕ вăрçă тертне. Акă мĕнле аса илет вăл çав вăхăтсене:

– Ун чух эпир, вăтам шкул пĕтернĕскерсем, мал ĕмĕтпе пурăнаттăмăр.

Левитан сасси вăрçă пуçланни çинчен пĕлтернĕ чух вăл хăйĕн хĕр тантăшĕсемпе, аслисемпе пĕрле уя тислĕк кăларнă пулнă...

Ниме пăхмасăр Зоя Шупашкара пединститута физикăпа математика факультетне вĕренме каять. Анчах пулмасть унăн учитель пуласси. 2 уйăх вĕренсен килнĕ хыпар, тĕрĕсрех каласан, вăрçă илсе килнĕ нуша ăна ĕмĕчĕпе сыв пуллашма васкатать:

– Харьковран электроаппаратура завочĕ куçса килмелле, ку вырăнта институт пулмасть, вăл Сĕнтĕрвăррине куçать, – терĕç пире, – аса илет паян 87-мĕш çула çити пыракан Зоя Леонтьевна. – Ун чухне кашни çын пуçне çăкăр 400-шер грамм паратчĕç, Муркаша çуран илме килеттĕмĕр.

Çӳреме инçе тесе хĕр вĕренме пăрахать. Тӳрех ăна Сăр хĕррине окоп чавнă çĕре яраççĕ. Кунсерен 8 километр çуран утнă май сахал пулнă-и пите тăм илтерсе яни.

– Хальхи пек икшер хут çи-пуç тăхăнма май пулман ун чух, – хаш! сывлать кинемей.

Хĕл сиввине çăпатапа сăхманпах чăтса ирттерсе янă.

Унтан таврăнсан виçĕ çамрăка (унпа пĕрле тата Ксенофонт Павлиновпа Клеопатра Рудакова пулнă) Атăл леш енне брикет турттарма янă. Вылăх апачĕ патне Муркаша килмелли унăн черет çитни хĕрĕн пурнăçне тепĕр майлă улăштарса хунă. Колхоз правленине счетовода ĕçлеме чĕнеççĕ Зойăна. Çав хушăрах пултаруллă та çаврăнăçуллă хĕр хуçалăхра комсомол организацийĕн секретарĕн, 1944 çултан пуçласа ВЛКСМ райкомĕн бюро членĕн тивĕçĕсене те тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пырать.

Чăннипех те ачи-пăчи, çамрăкĕ питĕ вăйлă ĕçленĕ вăл вăхăтсенче.

– Ачасем питĕ итлетчĕç. Ун чухне пурин те пĕр девиз пулнă: «Йăлтах – фронта валли». Ĕç хыççăн çамрăксемпе каçхине клуба пуçтарăнаттăмăр: кам çăм арлать, кам нуски-чăлха çыхать, – паянхи пекех куç умне кăларать çав йывăр çулсене Зоя Леонтьевна.

Бригадăсем тăрăх фронта валли çи-пуç пуçтарса çӳренĕ вĕсем. Мĕнле манса кайăн-ха тата тырă вырнă чухне Хĕрлĕ ялавсем çакса, Хĕрлĕ ялавсемпе фронта валли 20-25 лавпа тырă леçнине?

Никам та хăй çинчен шутламан ун чухне. Танк колонни тума фронт валли укçа пуçтарма тытăнсан З. Синичкина комсомолка 10 пин тенкĕлĕх облигаци туянать. Самолет тума тата тепĕр 2 пин тенкĕ парать.

Тăрăшни сая каймарĕ. Кам мĕнле пултарнă, çапла çывхартрĕ Аслă Çĕнтерĕве. Левитан вăрçă пĕтни çинчен пĕлтернине илтсен мĕнле савăннине ăнлантарса пама та çук пулĕ. З. Синичкинăн биографийĕн çĕнĕ страницисем уçăлма пуçлаççĕ вăрçă хыççăн.

Колхоза пĕрлештерсен Зоя Леонтьевнăн та ĕç вырăнне улăштарма лекет.

– Евтихий Андреевича председателе лартатпăр, сана – бухгалтера, – теççĕ ăна партин райкомĕнче.

– Парти ярсан, каятăн, – çирĕппĕн каланă унта хĕр турткаланса тăнине курсан.

Урама тухсан Е.А. Андреев çĕнĕ колхозăн çĕнĕ бухгалтерне лашапа тӳрех правление лартса каять. Ял Советне те кĕртмест.

Кĕркунне вара çав 1951 çулхине колхоз бухгалтерĕ хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме шутлать. Хăй шухăшне Евтихий Андреевича калать.

– Ыран ирччен ведомость туса пĕтерсен, каятăн экзамен тытма, – татса хурать лешĕ.

Кун пек мар йывăрлăха чăтса ирттернĕ хĕрĕн ку вăл кăмăл тултармалли ĕç пулнă.

– Ведомость хатĕрлесе пĕтертĕм, халĕ хулана каятăп, – тенĕ ир-ирех З. Синичкина тулли кăмăлпа.

– Ниçта та каймастăн, – пулнă председателĕн сăмахĕ.

Хăй шутланине тума хăнăхнă бухгалтер та çухалса кайман:

– Хăвăр сăмахăн хуçи хăвăрах пулăр. Эсир мана вĕренме кайма чарма пултараймастăрах, – тенĕ çамрăк хĕрарăм.

Ку вăхăтра унăн мăшăрĕ те Е.Н. Никоноров колхоз складĕнче ĕçленĕ.

Суту-илӳпе коопераци шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вара Зоя Леонтьевна мĕн тивĕçлĕ канăва тухичченех потребкооперации системинче вăй хурать. Счетовод та, бухгалтерăн пулăшакан те, унăн çумĕ те пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕмĕрĕпе çав тери кăмăллă вăл.

– Эпĕ никампа та ку таранччен вăрçса курман. Тата хам ĕçе çав тери юрататтăмччĕ. Чи кирли - халăха, хамăрăн ĕçе юратмалла. Çынпа килĕштерсе ĕçлеме пĕлмелле, – тет вăл.

Мĕнех хушса калăйăн çак сăмахсем çумне. Пурнăç чăнлăхĕпе тĕрĕсленнĕ шухăшсем çумне.

Л. ПАВЛОВА.

**Килти хушма хуçалăх**

## Тухăç пирки

**Шăрăх çанталăкра çĕр улми речĕсене шăварни вырăнлă-и тата «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче паян мĕнле ĕçсене пурнăçлама юрать тата хăшĕсенчен тытăнса тăмалла?**

**А. СМИРНОВ.**

Вăрăма кайнă шăрăх та типĕ çанталăкра çĕр улми кассисене тарăн кăпкалатни, ретсене купалантарни, çум çумласси ĕçлени вырăнлă ĕç мар. Мĕншĕн тесен тăпрари ахаль те сахал нӳрĕк туххăмрах пăсланса пĕтет. Çав вăхăтрах çумăр çуса иртсен е шăварса пĕтерсен тӳрех касăсем хушшине кăпкалатса тăпрана ретсем çумне купалантармалла. Çакă хушма çимĕç тытăнма пулăшать. Çĕр улмие алăпа шăварнă чух пĕр лейка шыв çĕр улмин 2-3 тĕммине çитет.

## Хăярсене шăварасси

**Хăяр йăранĕсенче шăрăхпа мĕнле кĕрешмелле?**

**П. ПАВЛОВ.**

Хăярсене ытлашши нӳрĕк пулсан та, çитменнине шывĕ сивĕрех пулсан, пысăк сиен кӳрет. Паян хăяр пуçтармалли вăхăт. Йăрансем çинче тытăннă çимĕçсем те нумай. Вĕсене аталанса çитме вара нӳрĕк кирлĕ. Çавăнпа икĕ кунта пĕрре те пулин хăяр йăранĕсене шăварсах тăмалла. Вунă кунра пĕрре хăяра тислĕкпе хутăштарнă шывпа шăварни вырăнлă.

**«Домашняя газета» хаçатран.**

**Пушар хуралĕпе калаçатпăр**

# «Мĕншĕн шыв çук? Мĕншĕн час килместĕр?»

***Районти пушар хуралĕ йывăр вăхăтра пирĕншĕн çăлăнăç вырăннех. Анчах тепĕр чух «хĕрлĕ автанпа» кĕрешме çитсен пушар машинин нумай ĕçлемесĕрех шыв пĕтнине асăрхама пулать. Кĕтекеншĕн вăхăт хуллен иртет тенĕ пек-ши, анчах тепĕр чух пушар машини вырăна хăвăрт çитеймен пек туйăнать. Çак ыйтусем çине пушар хуралĕ мĕнле ответ парать-ши? Кăçалхи шăрăх çанталăкра ку пушшех те вырăнлă ыйту.***

**Редакцие шăнкăравланинчен.**

**Вулакансен ыйтăвĕпе эпир Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн профилактика инструкторне Оксана Васильевна Александровăна паллаштартăмăр. Хурав нумай кĕттермерĕ.**

«Вăрттăнлăх мар, вăрăма тăсăлнă шăрăх çу кунĕсем пушар тухаслăха самай ӳстерчĕç. Паян çакна куллен асра тытакансем тата лару-тăрăва шута илсе пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнакансем вут-кăвар ирĕке кайниччен «хӳтĕленме пултараççĕ». Утă уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне районта 26 пушар пулчĕ. Пĕлтĕрхи çак вăхăтра асăннă инкексен калăпăшĕ 23 тĕслĕхпе танлашнăччĕ.

Пушар сӳнтерес практикăра тĕп вырăнта çулăм ярса илнĕ вырăна çирĕплетнĕ температурăна çити сивĕтесси пулса тăрать. Анчах нихăçан пулман шăрăх çанталăк çак ĕçре ура хурать. Пушар сӳнтерекенсем каланинчен те кăçалхи пушарсене сӳнтерме чылай йывăртараххи курăнать. Апла пулсан вăл е ку сăлтава пула ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешесси – пĕрлехи ĕç. Анчах...

Пушар тухнă вырăнсене çитсен те нумай чух çакнашкал ыйтусене илтме пулать: «Мĕншĕн час килмерĕр? Мĕншĕн шывĕ сахал?» Яланах пушар хуралĕнче тăракансем айăплă пек пулса тухать. Кунта манăн çакăн пек ăнлантару ĕç туса ирттерес килет.

Инкек тӳсекенсене пулăшма васкакан пушар машинин нормативлă документсемпе килĕшӳллĕн сехетре 40 километр хăвăртлăхпа каймалла. Анчах пирĕн водительсен хăйсем çине ответлăха илсе час-часах хăвăртлăха ӳстереççĕ. Шутласа пăхăр-ха, 18 тонна йывăрăш КамАЗ 6 тонна шыв илсе пырать. Пĕтĕмĕшле 24 тонна таякан автомашина вара ялти çулсем çинче мĕнлерех хăвăртлăхпа кайма пултартăр-ха?

Яланах шывпа тулли çӳрекен автомашина пушара çитсен анлă сарăлнă вуткăвара сӳнтерме 6 тоннăна 10 минутран та маларах кăларса ярать. Анчах час-часах шывĕ çав-çавах çитмест. Çывăхра шыв илмелли вырăн çукран пушар машинин шыв шырама пуçлама тивет... Кунта ялсенче пĕвесем çукки, пуррисем патне те пыма çул пулманни пĕтĕмĕшле хăрушлăха ӳстерет кăна. Çакна ял çыннисем те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те ăнланасса шанас килет. Кун пирки нумай калаçатпăр, анчах лавĕ çав-çавах вырăнтан хускалмасть. Кунта пушар хуралĕн ĕçченĕсен айăпне куратăр-и?..

Муркашри пушар машинин районăн вăл е ку вĕçне çитме вăхăчĕ те самай иртет. Вырăнсенчи ведомствăлла пушар хуралĕсем хупăнни пĕтĕмĕшле хăрушлăха темиçе хут ӳстерет. Муркашсене вырăна çитме вара 20-30 минут таранах кирлĕ. Кунта пушар пирки хăвăртрах пĕлтерни те пĕлтерĕшлĕ.

131-мĕш номерлĕ «Раççей Федерацийĕнчи вырăнти самоуправлени ĕçне йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсем» Федераллă саккунпа муниципаллă пушар машинисене тытса тăрассине те ял тăрăхĕсем çине хунă. Анчах паянхи куна хускатнă ыйтупа пăр тапраннийĕ курăнмасть».

А. БЕЛОВ çырса илнĕ.

# Таса çăл куçра шыва кĕрĕпĕр

**Турра ĕненекенсем валли**

***Вăл е ку вырăнсенчи таса çăл куçсенче шыва кĕресси халăхăмăр хушшинче анлă сарăлнă ĕнтĕ. Нумайăшĕ Чул хула облаçĕнчи Дивеево пирки илтнĕ ĕнтĕ. Унта кайса килнисем те, кайма ĕмĕтленекенсем те пирĕн хушăмăрта сахал мар. Çав вăхăтра çывăхри таса çăл куççем пирки темшĕн пĕлсех каймастпăр е унта васкамастпăр. Çак çитменлĕхе пĕтерсе Муркаш салинчи Турă амăшĕн Владимир турăшĕн православи чиркӳ прихучĕн настоятелĕ Федор Ягушов иерей ырă пуçару турĕ. Çапла вара Илем праçникĕнче (çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче) 17 сехет те 30 минутра Муркаш чиркĕвĕ патĕнчен паломниксен ушкăнĕ 15 çын вырнаçмалăх «Газель» автобуспа Каршлăхри таса çăл куççем патне çул тухать. Çавна май эпĕ Федор аттепе тĕл пулса калаçрăм.***



**– Федор атте, мĕн тĕллевпе йĕркелетĕр-ха эсир çак çул çӳреве?**

– Пирĕн çул çӳрев паян пуçланнă ыйту мар. Ăна пирĕн патăмăра çӳрекенсем те пĕрре мар пуçарнă, анчах ĕç вырăнтан тапранман. Халĕ вара çак тĕллеве пурнăçа кĕртесех терĕмĕр. Çакна пурнăçлама Аттемĕр Турă пулăшса пырасса, пире вăй-хăват парасса шанса тăратпăр. Таса вырăнсене кайса çӳресси паян пуçланнă йĕрке мар. Ĕлĕк-авалах Турра ĕненекенсем Таса вырăнсене çӳресси пурнăç йĕркинче пулнă. Ĕненекенсем çак çул çӳревсенче Турă хăйсене ыр пиллĕх панине çирĕп ĕненнĕ. Тĕрĕссипе çапла пулса тухать те. Таса вырăнсене тухса çӳрекенсем унта çитсен Турă тасалăхне сĕртĕнеççĕ. Çав вырăнсенчи хамăрăн çирĕп ĕненĕвĕрсемпе хăватлă Турăшсене чуп тунипе Турă ырăлăхне ыйтса илетпĕр. Ку вара – Турра ĕненекен кашни çыннăн тивĕçĕ.

**– Дивеево тата Каршлăх. Танлаштару тата уйрăмлăхсем.**

– Манăн кунта танлаштару ĕçĕ тăвас килмест. Пирĕн хамăрăн мĕн пурри пе çырлахма пĕлес пулать. Каршлăхра та таса çăл куç пурри нумай ентешĕмĕрсене инçете каймасăрах аттемĕр Турăран пулăшу тата ыр пиллĕх ыйтса илме май парать. Кунти таса çăл куçра шыва кĕни эпир Турăран тасалăхне сĕртĕннипе пулать те.

**– Эпĕ унта пулса курнă-ха та, анчах ыйтмасăр пултараймастăп: Каршлăхри тасалăхпа Турă ыр пиллĕхĕ юнашар тăраççĕ-и?**

– Паллах. Кунти таса вырăнсем, илемлĕ вăрман пирĕнте таса туйăмсем вăратаççĕ, ыранхи куна шанса Турăпа юнашар пурăнма хавхалантараççĕ. Каршлăхри мăнастир территорийĕнче вырнаçнă икĕ таса çăл куç çынсене йышăнма яланах хатĕр. Паян кунта виççĕмĕш çăл куçа кĕл туса тасатасси кун йĕркинче тăрать.

**– Таса вырăнта шыва кĕнĕ чух унта пынă çыннăн мĕн пĕлмелле-ха?**

– Малтанах çакна калас килет. Таса çăл куçра шыва кĕнĕ чух Турра ĕненекенсен Турăран пулăшу, сипленӳ ыйтмалла. Кунта шыва кĕни ӳт-пӳ çинчи чир-чĕрпе чунри ыратăва юсанма пулăшать. Çавăнпа та çакна ĕненекенсен шыва кĕрес ĕçе Турăран хăраса пымалла. Шыва кĕме пынисен хăйсен тĕллевне пурнăçличчен кунти чиркĕве кĕрсе кĕл тумалла, таса çăл куçра шыва кĕрсе Туррăмăр ыр пиллĕхне ыйтса илме Турра парне памалла (çурта илсе лартмалла, хăваршăн таса çывăх çыннăрсемшĕн асăнма саккас тумалла). Çакна та калас килет: таса çăл куççем мăнастир территорийĕнче пулнăран унта пынă чух хĕрарăмсен шăлаварпа, кĕске юбкăпа, арçынсен кĕске шăлаварпа пулмалла мар. Хĕрарăмсен тутăр çыхмалла. Тепĕр асăрхаттару, унта пыракансен ӳсĕр пулма юрамасть.

**– Шыва кĕнĕ чух йĕрки мĕнле?**

– Шыва кĕрекенĕн Ашшĕшĕн, Ывăлĕшĕн тата Çветтуй Сывлăшшийĕшăн сăхă сăхса виçĕ хутчен шыва чăмса тухмалла. Шыва кĕме аялти кĕпейĕмпе е касхи сорочкăсемпе пымалла.

**– Çул укçи те пулĕ-ха?**

– Çапла, таса çăл куçра шыва кĕме каяс текенсен малтан 8-927-844-31-72 телефонпа шăнкăравласа пĕлтермелле. Çул укçи – 100 тенкĕ. Ыйтакансем пулсан эпир кашни тунти кун 17 сехет те 30 минутра ку çул çӳреве тухатпăр.

А. БЕЛОВ калаçнă.

# «Поддержка» компани – çирĕп шанчăк

**Усĕмсен çулĕпе**

***Çирĕм çула яхăн каялла кăна-ха çĕр-шывра страхлакан пĕр компани çеç пулнă. Паян вара вĕсен хушшинче хăвна тивĕçтерекеннине суйласа илме те пур чухне пĕлсех каяймастăн. Чăваш Республикинче акă «Поддержка» патшалăх страхлакан компани аван аталанса пырать. Компани 16 çул ытла ĕнтĕ хăйĕн клиенчĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерет.***

***«Поддержка» патшалăх страхлакан компанин Муркаш районĕнчи представительствин ертӳçи Фаина Валентиновна Кирпичникова каланă тăрăх, кăçалхи пĕрремĕш çур çулти кăтартусем пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 30 процент ытла ӳснĕ. Апла пулсан «Поддержка» клиентсен шанчăкне тӳрре кăларни курăнать. Компанин ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе вара эпир редакцие Ф.В. КИРПИЧНИКОВĂНА чĕнтĕмĕр.***

**– Фаина Валентиновна, «поддержка» тесен эпир яланах шанчăк, тĕрек пуррине туйма хăнăхнă. Сирĕн страхлакан компани те хăйĕн ятне çирĕппĕнех тӳрре кăларать пулас?**

– 2008 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче «Чувашия-Поддержка» страхлакан компани усă акционерлă пĕрлешӳĕн акционерĕсем йышăннипе пирĕн компание «Поддержка» патшалăх страхлакан компани» усă акционерлă пĕрлешӳ туса хума йышăннă. Çак çĕнĕ ят компанин сумĕпе тĕллевĕсене тĕплĕн уçса парать те. 2008 çултанпа «Поддержка» компанин филиалĕсем Чăваш Республикин тулашĕнче те уçăлма тытăнчĕç.

Паянхи куна пирĕн компани Раççейри страхлакан компанисенчен «Поддержка» системинчи патшалăх пайĕллĕ пĕртен-пĕр компани пулса тăрать. 1999 çултанпа компанин устав капиталĕнче Чăваш Республикин Правительствин пайĕ те пур. Çак вăхăта вăл 34,63 процентпа танлашать.

Пирĕн компанин устав капиталĕ ӳссе пынăран эпир хамăрăн клиентсемпе туллинрех ĕçлесе пыратпăр. Хамăрăн ĕç-хĕлĕн тĕп кăтартăвĕсене – страхлани çинчен килĕшӳсем тунине, страхлама хывнă укçан калăпăшне, страхланă клиента кирлĕ пек укçа-тенкĕпе саплаштарнине – юлашки 5 çул хушшинче чылай ӳстерме пултартăмăр. Апла пулсан пире шанаççĕ. Çавăнпа та хамăр клиентсен интересĕсене туллин тивĕçтересси – пирĕншĕн яланах малти вырăнта.

Ытти страхлакан компанисенчен пире лайăх енĕпе уйăрса тăракан ĕçри пĕр уйрăмлăх пирки калас килет. Эпир пур ыйтăва та страхланă клиентсемпе пĕрле килĕшсе татса паратпăр, вăл шутра тарифсене шайлаштарассипе те, тăкак тӳснин ыйтăвĕсене те. Эпир вĕсене яланах васкавлă тата хамăр тĕллĕн татса пама пултаратпăр. Çапла вара тăкаксене саплаштарассипе клиентсене кĕттерместпĕр.

**– Çынсем ытларах мĕн страхлаççĕ-ха?**

– Пирĕн пата ытларах инкек-синкек сиксе тухассинчен, харпăрлăхри çурт-йĕре, унти пурлăха, выльăх-чĕрлĕхе, транспорта страхлассипе ытларах килеççĕ. Çакă малтанах пурнăçпа çыхăннă çке-ха. «Моя семья», «Забота о пенсионерах», «Любимый дом», «Добрые соседи», «Дачный сезон», «Надежная защита», «Специальный» страховани тĕсĕсен ячĕсем те хăйсем пиркех калаççĕ. Çак тĕссем клиентсене килĕшеççĕ, вĕсене тивĕçтереççĕ. Июль уйăхĕнчен пуçласа декабрь вĕçĕччен ачасене ятарласа страхлассипе «Забота о детях» программа ĕçлет.

Пирĕн компанире килçуртне, пурлăхне, выльăх-чĕрлĕхне страхланă вăрçă ветеранĕсене кăçалхи çул, Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтернĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа, кашни яла ситсе асăнмалăх парнесем патăмăр.

Ял хуçалăх предприятийĕсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем вара хăйсем туса илес тупăша пирĕн патра страхлама кăмăлласçĕ. Ял хуçалăх техникине те, выльăх-чĕрлĕхе те, пурлăха та нумай хуçалăх пирĕн патра страхлать.

**– Сирĕн патăрта çынсем кредит та илме пултараççĕ. Çак ĕç тата еплерех аталанса пырать?**

– 2003 çултанпа устав тăрăх «Моргауши–Согласие» ял хуçалăх потребитель кооперативĕ ĕçлет. «АПК-на аталантарасси» нацпроектпа килĕшӳллĕн тăрăшатпăр. Займ илес пулсан е ирĕклĕ укçа-тенкĕне вăхăтлăх хывас пулсан малтан çак кооператив членне кĕмелле. Кооператив членĕсен йышĕ пирĕн пĕчĕк мар. Вĕсене валли вара тĕрлĕ çăмăллăх пăхса хунă. Заем илме ыйтса çырнă ыйтăва кĕске хушăрах татса паратпăр. Çынсем çакăнпа кăмăллă та. Кооперативăн ĕç тăвакан директорĕнче эпĕ хамах вăй хуратăп, тĕп бухгалтер пулса чылай çул хушши С. Максимова тăрăшать.

**– Çакнашкал пысăк калăпăшлă ĕç пахалăхĕ ăна лайăх йĕркеленинчен те килет, паллах.**

– Районти представительствăна эпĕ ултă çул ытла ертсе пыратăп. Çак тапхăрта эпир яланах республикăра малта пыракансен шутĕнче пулнă. Пĕлтĕрхи кăтартусемпе те иккĕмĕш вырăна тухма пултартăмăр. Ĕçе пĕлсе çитнĕ, ăна ăнланакан специалистсем вăй хунин тӳпи ĕнтĕ çакă. Елена Васильева тата Светлана Максимова страхлакан агентсем компанин чи лайăх 10 агентчĕн йышне кĕме пултарчĕç. Нумай çул хушши тимлесе, шаннă ĕçе яваплăхпа пурнăçлаççĕ специалистсем. Нина Еремина ăнăçуллă ĕçлесе пынине те калас килет. Вăл кунта чи нумай ĕçлекенни. Ыттисем те тăрăшсах ĕçлеççĕ. Тăрăшса ĕçлекенсем пирки вара ырă сăмахсем çеç калама пултаратăп.

**– Специалистсене вĕрентме «Поддержка» компани мĕнлерех утăмсем тăвать-ха?**

– Пирĕн специалистсемшĕн Етĕрне районĕнче йĕркеленĕ вĕрентӳпе инноваци центрĕ пулăшусă вырăннех. Раççейри 30 ытла регионтан килнĕ çынсем пулса курнă та ĕнтĕ унта, унăн ĕçĕпе паллашнă. Центрта часчасах ларусемпе канашлусем иртеççĕ. Етĕрне районĕнчех «Рябинка» (çынсенчен сĕт пуçтарса тирпейлет) тата «Дары природы» (пахча çимĕçпе ĕçлет) кооперативсем аван аталанса пыраççĕ. Çакă та республикăри «Поддержка» патшалăх страховани компанийĕшĕн пысăк тĕрек.

**– Пирĕн районтах акă сирĕн компанисĕр пуçне страхлассипе ĕçлекен компанисем татах пур. Конкурентлă лару-тăру сирĕн ĕç çине мĕнлерех витĕм кӳрет?**

– Конкурентлăх пурри шăпах пирĕн агентсене вĕçĕм хусканура пулма, ĕçе лайăхлатмалли, унăн кăтартăвĕсене çӳллĕрех шая хăпартмалли майсем шырама хистет. Пирĕн агентсем ĕçлеме юратнипе, ĕçре, çынсем умĕнче ответлăха туйнипе хăйсем умне лартнă тĕллевсене пурнăçлассишĕн тăрăшнипе палăрса тăраççĕ. Пирĕн ретре çамрăксем пурри те хавхалантарать.

**– Тен сирĕн патра вакансисем те пур. Аван аталанса пыракан компание ĕçлеме вырнаçас шутлисем те сахал мар пулĕ.**

– Регионти представительство пекех, район представительстви те хăйĕн ĕçне сарсах пынăран пирĕн патăмăрта страховани агенчĕсен вакансийĕсем пур. Паянхи куна пирĕн патра инспекторта ĕçлеме çын кирлĕ. Пирĕн патăмăрта ĕçлекенсен карьера ӳсĕмĕ тума та çулсем усă. Агентсем харпăр хăй ĕçлесе илнĕ укçапа хавхаланнисĕр пуçне клиентсене çирĕп шанчăкпа тивĕçтерничен те яланах кămăллă.

**– 2010 çулта эсир мĕнле тĕллевсемпе ĕçлесе пыратăр?**

– Клиентсене тивĕçтерекен услугăсене çӳллĕрех шая хăпартас тесе эпир татах та ытларах тăрăшатпăр. Паллах, пирĕн клиентсен йышне ӳстерессине те – кашни кун тумалли ĕç. Çакна эпир пурнăçлатпăр тесе шутлатăп. Кашни клиентпах уйрăммăн та тимлĕн ĕçлесси – пирĕн тĕп саккун. Çавăнпа та клиентсемпе килĕшӳ тăвиччен правилăсемпе ăнлантару ĕçне туса ирттеретпĕр. Çынсен шанчăкĕ çирĕп пултăр, вĕсем пĕтĕмпех уççăн пĕлсе тăччăр. Çынсемпе ĕçлесси, паллах, йывăр ĕç. Пирĕн патра ĕçлекенсем вара кашни çынпа пĕр чĕлхе тупма пултарччăр тесе тăрăшатпăр, вĕрентӳ ĕçĕсене те ирттеретпĕр. Çак ĕçе тишкерсе тăнăран кăçал та ĕçри чи лайăх агентсене палăртатпăр.

Пирĕн клиентсем хамăрпа ырă кăмăллăн калаçни, инкекре пулăшсан тав туни – пирĕншĕн чи пысăк парне. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн ĕçе хак пани.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

# Бизнес ăнăçăвĕ – коллектив аллинче

**Районти пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн вĕренмелли пур**

Утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче район администрацийĕ Муркаш енре пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăра ĕçлесе тăван тăрăх экономикине тĕреклетессипе вăй хуракансен кунне ирттерчĕ. Савăнăçлă ларăва палăртнă вăхăтра Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи «Илем» кафен пĕчĕк залĕнче районти предпринимательсен пысăк йышĕ пухăнни тата канашлу ирттерме çак кафене суйласа илни ăнсăртран пулмарĕ...

Тĕнчери финанспа экономика кризисне пăхмасăрах пирĕн районта потребительсен рынокĕ малалла аталанать. Юлашки вăхăтра çеç суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятийĕсем 9 уçăлчĕç. Вĕсем 21 хушма ĕç вырăнĕ туса пани – пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр.

Пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăш районĕне пĕлтĕр 15 процент (285 миллион тенкĕлĕх) пысăкланнă пулсан, унта пĕчĕк бизнесăн тӳпи 17,2 процент.

– Муркаш районĕ республикăшăн кирек хăш ĕçре те яланах тĕслĕх пулса тăнă. Çакă пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕнче те аван курăнать. Район администрацийĕн йышăнăвĕсене предпринимательсем айккинче хăварманни те сирĕн пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна сумлăрах аталантарма çул уçă пулнине çирĕплетет, – терĕ пĕчĕк тата вăтам предпринимательство кунне хутшăнса Чăваш Республикин Экономикăпа суту-илӳ министерствин предпринимательствăпа ал ĕç аталану пайĕн пуçлăхĕ С. Ефимова.



Бизнес ăнăçăвĕ коллектив аллинче пулни Мăн Сĕнтĕр райповĕн Москакассинчи «Илем» кафе ĕçĕ-хĕлĕнчен те, кунта вăй хуракансемпе тĕл пулса калаçнинчен те аван курăнать. Буфетра вăй хуракансемпе пĕрле кунта 25 çын ĕçлет. Вĕсенчен кашниех хăй ĕçĕнче пуян опытлă специалист, çавăнпа та ку каферен кăмăлсăр тухакансем çук. Кафе райпори обществăлла апатлану предприятийĕсен пĕтĕмĕшле тавар çаврăнăшĕн 70 процентне хăй пурнăçланинчен те тĕлĕнмелли çук. Çакна кафе заведующийĕ Лидия Федоровна Гаврилова пĕр хумханмасăр каласа пани ĕç коллективĕнче шанчăкпа туслăх хуçаланнине систерет.

– Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 38 çул пулсан, Мăн Сĕнтĕр райповĕнчи стаж манăн 25 çул. Вăл шутран 10 çул «Илем» кафере ĕçлетĕп. Кунти туслă коллективпа уйăхне 2300 пин тенкĕ тавар çаврăнăш туни савăнтарать кăна, – терĕ кĕске калаçура Л. Гаврилова.

Ĕç коллективĕнче тивĕçлĕ канăва тухнă аслă юлташĕсене те манăçа хăвармаççĕ. Акă чĕрĕк ĕмĕр ытла кунта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Раиса Аркадьевна Барминовăна **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре сулахайри)** ĕнерхи ĕçтешсем çуллахи отпусксене кайнă вăхăтра пулăшма ĕçе чĕнсе кăларнă. Унпа пĕрле ĕçлекен Любовь Ивановна Христофоровапа Раиса Алексеевна Кузьмина **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре юнашаррисем)** та пуян опытлă поварсем.



Коллективра çамрăксем те аслисенчен юлмаççĕ. Акă Марина Александровна Кудряшова технологпа **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре компьютер умĕнче)** Анастасия Гаврилова кассир – аслисен ĕç вăрттăнлăхĕсене алла илекен специалистсем. Марина кооператив техникумĕнчен 2000 çулта вĕренсе тухсан та пĕлӳ çулне хупман. Куçăмсăр майпа çамрăк Мускаври апат-çимĕç академине пĕтерет. 10 çул ĕнтĕ унăн кунти ĕç стажĕ.

– Аслисем шанаççĕ те ĕçлетпĕр. Çĕнĕлĕхсем пурнăça кĕртсе блюдăсен ассортиментне анлăлататпăр. Кĕрсе курăр! Тутанăр та хак парăр! – терĕ технолог поварсем чĕннĕ çĕрелле пăрăннă май.

... Каферен тухатăп. Мана хирĕç çынсем пĕрин хыççăн тепри кĕреççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкрчĕкĕсем.**

# Чăваш чĕлхи ăсти

## Пирĕн паллă ентешсем



***Тăван чĕлхе пирки сăмах пуçарсан хăшĕсем: «Чăваш чĕлхи Канашран иртсен кирлĕ мар», – теççĕ. Çул çӳресех курнисем унашкал «ăслă» сăмахсемпех перкелешмеççĕ паллах. Мĕншĕн тесен пирĕн чĕлхе Вăтам Атăл тăрăхĕнче питĕ анлă сарăлнă. Ку вăл Атăл паттăр саманинче, Пăлхар патшалăх вăхăтĕнче Çурçĕр Евразире тĕп чĕлхе шайне çитнин ахрăмĕ-тăр.***

Юлашки ĕмĕрте чăваш чĕлхин ăслăлăхĕн аталану çул-йĕрĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕççемпе янăранă ятсем хăйсем мĕне тăраççĕ: Н.И. Ашмарин, Тимухха Хĕветĕрĕ, Наум Урхи, М.Р. Федотов, Л.П. Сергеев, М.Ф. Чернов, М.И. Скворцов, Н.И. Егоров, Г.А. Дегтярев т. ыт. те.

Хамăр ентеше Геннадий Анатольевич Дегтяревах илер-ха. Хальхи вăхăтри сумлă чĕлхеçĕ, лексикограф, тăлмач, терминолог. Теприсем каланă пек паянхи кун чăваш чĕлхине сухалаканни. Хăй вăл çапла калать: «Чăваш чĕлхи пирĕн ăшра, ăсра, асра. Вăл пирĕн тавра... Тăван чĕлхе атте-анне пекех, эпир ăна суйласа илместпĕр. Вăл Турă пани тата атте-анне парни».

Романтик чунлă çак ăсчах хамăр районти Ахмане ялĕнче 1960 çулхи Илем кунĕнче кун çути курнă. Пĕчĕкренех кĕнекене ăша хывнăскер, унта çырнине Турăлăх пайăрки евĕр туйма, ăна вĕçĕм кĕтме тытăнать. Колхозлă ял пурнăçĕпе çитĕненскер, вăтам классенчех тăван ял-йыш, «Передовик» совхоз ĕçĕ-хĕлĕ пирки райхаçата çырма пуçлать. Тĕрленчĕксем, сăвăсем хайлать, тăтăш пичетленме пуçлать. 1977 çулта «Пионер сасси» хаçат çамрăк ялкорсем хушшинче ирттернĕ ăмăртăвăн лауреачĕ пулса тăрать.

Журналистикăпа хавхаланнă Гена Калайкассинчи вăтам шкул хыççăн Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕрет. Кунти чăваш уйрăмĕнче ĕçлекен М. Скворцов, В. Станъял вĕрентекенсен витĕмĕпе вăл кĕçех сумлăрах хайлавсем çырать. Çав вăхăтрах тăван ялтан тухнă Андрей Петтоки, Михаил Ахмане сăвăçсен кун-çулне тĕпчеме пуçлать, чĕлхе ăслăлăхне кĕрсе каять.

Ырми-канми тăрăшакан студента асăрхаса унтан анлăрах тавракурăмлă специалист хатĕрлес тĕллевпе 3-мĕш курс хыççăн ăна Ленинградри патшалăх университечĕн Хĕвелтухăç факультетне вĕренме яраççĕ. Турке уйрăмĕнче ăнăçлă вĕренсе 1982 çулта диплом илсен, Г. Дегтярев виçĕ çул аспирантурăра вĕренет. Тĕрĕк филологийĕн кафедринче çĕр-шыври паллă тюркологсемпе – А.Н. Кононовпа, С.Н. Ивановпа, С.Г. Кляшторныйпа – тачă хутшăнура ĕçлени Г. Дегтяревăн ăслăлăхри çул-йĕрне самаях уçăмлатнă, профессин çирĕп никĕсне калăпланă.

1988 çулхи нарăс уйăхĕнче Геннадий Анатольевич СССР Ăслăлăх академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕн институтĕнче «Чăваш чĕлхинчи çĕр ĕç лексики» темăпа хатĕрленĕ диссертацие хӳтĕлет. Ку çул унăн хастарлăхне ВЛКСМ Тĕп комитечĕн «Ĕçре паларнăшăн» паллипе те хакланăччĕ.

Ленинградран таврăнсан 1986 çултанпа Геннадий Анатольевич Гуманитари ăслăлăхĕсен чăваш патшалăх институчĕн чĕлхе пайĕнче ĕçлет. 2001 çултанпа ăслăлăхăн ертӳçĕ-ĕçченĕ. Филологин сарлака анинче вăл уйрăм каçалăкпа кăна хĕсĕнсе пымасть. Хăйĕн ĕçĕпе ӳсентăран ячĕсемпе çĕр ĕçпе çыхăннă сăмахсене те тĕпчет, куçару ĕçĕнче, вĕрентӳ хирĕнче тимлет, терминологи словарĕсем тăвать, çĕнĕ сăмахсем шырать, авалхи чĕлхемĕрĕн паянхи функцийĕпе хумханса ĕçлет, компьютера чăвашлатать т. ыт. те. Чĕрĕк ĕмĕр ĕнтĕ ăслăлăх ĕçĕсен пуххисенче, уйрăм кĕнекесен хуплашкисем çинче унăн ятне курма пулать.

Г.А. Дегтярев – лайăх канашçă та, ыр сунса ăслă сăмах каласа пулăшакан çын та. Тăван институтăн «Чăваш гуманитари хыпарĕсем» яланхи кăларăмĕсен çĕр-шыври сумĕ унăн ĕçĕнчен те сахал мар килет. Чĕлхе саккунĕ туллин пурнăçлантăр тесе те вăл нумай вăй хурать: республика ертӳçисен хушăвĕсене, саккунсене, учреждени-предприяти тата хула урамĕсен ячĕсене чăвашла куçарать. Самай вăхăт «Чĕлхе – тĕлĕнтермĕш тĕнче» ятпа радиопередача та ертсе пычĕ. Ахальтен мар вăл «Чăваш ен – çĕнĕ вăхăт» конкурсра (2004 çул) лауреат пулса тăчĕ. Тепĕр çулне унăн ĕçне паллă туса ЧР Президенчĕ ăна Хисеп грамотипе чысларĕ.

Сумлă ăсчах паян Гуманитари институчĕн Ăслăлăх канашĕнче те тăрать, Чăваш Республикин ведомствăсем хушшинчи патшалăхăн тĕп чĕлхипе ĕçлекен комиссин яваплă секретарĕ, тĕп хулара патшалăх чĕлхисемпе усă курас енĕпе ĕçлекен комисси членĕ те.

Хĕреслĕхе ĕненекенсен чи хаклă кĕнекине (библие) чăвашла куçарма витĕмлĕ пулăшнăшăн вăл архиерей тавне те тивĕçнĕ.

Çав хушăрах Геннадий Анатольевич институтăн терминологи лабораторине 15 çул ертсе пырать. Вăлах кĕвĕ-çемĕ, хореографи, компьютер терминĕсен словарĕсене хатĕрленĕ, психиатрин вырăсла-чăвашла словарьне, тĕрлĕ сборниксене редакциленĕ.

Г. Дегтярев хăйĕн ентешĕн А. Петтокин ĕçне-хĕлне нумай тĕпченĕ.

Пирĕн ентеш Турă панă çултан пăрăнмасăр ĕçлет. Ачалăхра амалланнă таса ĕмĕтсенчен пăрăнмасăр чăвашлăха малалла талпăнтарать.

**Е. ЕРАГИН,**
**чăваш халăх ăсчахĕ.**

## Тав тăватпăр

Инкек куça курăнса килмест теççĕ. Çак чăнлăх пирĕн тĕлĕшпе те килсе тухрĕ. Çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхне кĕрекен Апчар ялĕнче пирĕн хуçалăхра пушар тухрĕ. Кĕтмен-туман инкекре самантрах пурăнмалли çурт кĕлленчĕ. Йывăрлăхра эпир кĕпе-тумтире те, ытти хатĕрсене те вутран çăлса хăвараймарăмăр. Çавăнпа та хуйхă калăпăшĕ питех те пысăк. Анчах инкекре алă тăсса паракансем те, май пур таран пулăшакансем те тупăнчĕç. Вĕсем – «Поддержка» патшалăх страхлакан компанире ĕçлекенсем. Çак компанин пирĕн ялпа ĕçлекен агенчĕ Альбина Владимировна Иванова та, «Поддержка» патшалăх страхлакан компанин Муркашри представительствин ертӳçи Фаина Валентиновна Кирпичникова та пирĕн хуйха çывăха илчĕç. Страхлакан компани кĕске вăхăтрах страховани укçи-тенкине алла илмелле туса пачĕ. Ку пирĕншĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Çавăнпа та «Поддержка» патшалăх страхлакан компание тата унăн Муркашри представительствине тав тăватпăр. Вĕсен ĕçĕсем малашне те ăнса пырасса, вĕсен клиенчĕсен шучĕ ӳсессе шанатпăр.

**Седловсен çемйи.**

* * *

Участница долевой собственности Краснова Юлия Николаевна, 08.04.1945 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Красновой Юлии Николаевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2.

* * *

Участник долевой собственности Краснов Анатолий Ефимович, 16.12.1934 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Краснову Анатолию Ефимовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2.

* * *

Участник долевой собственности Краснов Василий Анатольевич, 04.11.1976 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,31 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Краснову Василию Анатольевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Молодежная, д. 9, кв. 2.

## Прогноз погоды с 31 июля по 6 августа www.yandex.ru

| сб 31 | вс 1 | пн 2 | вт 3 | ср 4 | чт 5 | пт 6 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность |
| +39 | +39 | +37 | +38 | +38 | +36 | +37 |
| +23 | +26 | +23 | +28 | +22 | +24 | +19 |

* * *

**Конкурс на ремонт кровли административного здания АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» выиграло ООО «Ремон», г. Чебоксары.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления








**Предприятие продает щебень фр. 40-70 М 1000 и песок строительный в любом количестве с Шешкарской пристани. Имеется возможность доставки до потребителя. Тел.: 8-927-669-26-10, 8-927-669-26-02. 7-8.**

* * *

**Парикмахерская «Шарм» оказывает следующие виды услуг: любая стрижка (женская, мужская) 100 руб., прокалывание ушей 270 руб., маникюр, покраска бровей и ресниц. Ремонт стриальных машин, -автоматов с выездом на дом. Тел.: 8-953-010-21-34.**

* * *

**Октябрьте иккĕмĕш пăруламалли хăмăр ĕне сутатăп. Нимĕç комбайнĕпе (Е 686) çĕр улми кăларма пулăшатпăр. Тел.: 8-952-027-94-45.**

* * *

**Продаю пиломатериал обрезной (хвоя), листы оцинкованные, профнастил, цемент, шифер. Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера». Тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 4-8.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.**
**Тел.: 8-905-347-99-15, 87-66-95. 4-5.**

* * *

**Срубы банные (хвоя, липа) в наличии и на заказ. Пиломатериалы (хвойные, лиственные) в наличии и на заказ. Печки банные. Тел.: 8-927-667-60-61, 8-927-846-01-08 2-10.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 5-8.**

* * *

**Продаю кольца колодезные. Цена 1500 руб., с доставкой. Бурение колодцев. Тел.: 89876664140. 9-9.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-9.**

* * *

**Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 17-17.**

* * *

**Требуется продавец. Тел.: 8(8352)67-21-37. 3-3.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в д. Москакасы. Общая площадь – 48,5 кв. м, жилая – 26,1 кв.м. Цена 850 тыс. руб. Тел.: 8-927-844-78-42, 8-937-390-95-78, 8-927-842-91-97. 2-2.**

* * *

**Магазин «Лотос» (д. Рыккакасы) реализует: профнастил оцинкованный – 210 руб. за 1 пог. м.; профнастил крашеный – 250 руб. за 1 пог. м.; профиль 40х20 – 50 руб. за 1 пог. м.; трубы для столбов на ограду, диаметром 60 мм, толщиной 5 мм – 120 руб. за 1 пог. м.; стека-рабица – от 500 рублей (10 метров в рулоне). Тел.: 8-917-665-27-26. 2-5.**

* * *

**Продаю: пресс ПР-1,5, прицепную копалку (Польская), лущильник ЛД-8, борону БДТ-3; грабли: ГВК-6, НВР-5, конные для мотоблока, навесную сажалку, измельчитель КИР-1,5; косилки: роторная, сегментная, зерномет ЗМ-30, ТР-ОР Т-25А. Тел.: 8-905-341-45-24.**



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 30.07.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3871.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.